25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942 МАЙ 15 ЭРНЕКУН 111(6046) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Çуркине ирттерес тĕлĕшпе пысăк тухăçлăхпа тата лайăх пахалăхпа ĕçленĕшĕн, ВКП(б) райкомĕсемпе ĕççынни депутачĕсен районсенчи Совечĕсен исполкомĕсем тăратнă тăрăх, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине çаксене кĕртнĕ:

17. **Октябрьски районри «Атăл» колхоз** (колхоз председателĕ **Ф. Рябин** юлташ). Колхоз тĕштырăсене тата пăрçа-ясмăк культурисене 7 ĕç кунĕнче акса пĕтернĕ. План тăрăх колхозăн çуртырри 140 гектар акса хăвармалла пулнă, вăл 142 гектар акнă. Планран ирттерсе акнă 2 гектар çинчи тырпул оборона фондне тата фашистсен пусмăрĕнчен ирĕке тухнă колхозниксене тăванла пулăшнă çĕре каять. Акара **А. Рябин** бригади хăйне уйрăмăнах палăртнă. Сухаçăсем: **Р. Шилова, А. Игнатьева, В. Рябин, Шишков** юлташсем акара фронтри пек ĕçленĕ. Вĕсем кулленхи нормăна 150 процент тултарса пынă.

18. **Октябрьски районри «Красная Чувашия» колхоз** (колхоз председателĕ **Е. Кузьмин** юлташ). Тĕштырăсене тата пăрçа-ясмăк культурисене колхоз 5 ĕç кунĕнче акса пĕтернĕ. Çуртырри акмалли пĕтĕм çĕр лаптăкне колхоз машинăпа акнă. Оборона фондне хывма тата нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке курнă колхозниксене пулăшма колхоз 2 гектар акса хăварнă. Акара **Ф. Патеров** юлташ ертсе пыракан 4-мĕш бригадăри колхозниксем: **А. Чупраков, А. Мастянов, М. Ефимов** юлташсем тата тырă акакансем: **Р. Скворцова, Г. Захаров** юлташсем вăрçăри пек ĕçленĕ. Вĕсем, 11 ретлĕ сеялкăпа ĕçлесе, кунсерен 6-шар гектар акнă, норма—4 гектар.

19. **Советски районри «Новый быт» колхоз** (колхоз председателĕ **С. Арсентьев**). Колхоз çурхи пĕрчĕллĕ тырăсене 6,5 ĕç кунĕнче акса пĕтернĕ. Планпа акма палăртнă 80 гектар вырăнне 92 гектар акса хăварнă. Кунсăр пуçне оборона фондне хывма тата нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă колхозниксене пулăшма 2 гектар акса хăварнă.

Çак колхозри яровизаторсем **С. Копров** тата **А. Шоркин** юлташсем тăрăшнипе пула вăрлăхсене 100 процентпех яровизацилесе акнă. **Х. Фолойина, М. Стеклов** сухаçсем нормăна кашни кунах 133—150 процент тултарса пынă. **М. Мурзаева, А. Юхтанова** юлташсем сеялкăпа тырă акса нормăна 150 процент тултарса пынă. Вăрлăх участокĕсене пĕтĕмпех машинăпа акса хăварнă. 70 çулти **Ф. Иванов**, 65 çулти **Г. Павлов** конюхсем вăрçă вăхăтĕнчи пек ĕçленĕ. **А. Юхтанова, К. Никитина, И. Лаврентьев** агитаторсем уйхирте, бригадăсенче, звеносенче колхозниксем хушшинче массăллă ăнлантару ĕçне тăтăшах туса пынă.

Хатĕрлев ĕçне тĕпренех вăйлатмалла

Хальхи вăхăт хатĕрлев организацийĕсем çине пысăк ответлăх хурать. Нимĕç оккупанчĕсене çĕмĕрсе пыракан Хĕрлĕ Çар валли пирĕн ялхуçалăх продукчĕсене вăхăтра тата çителĕклĕ таранах хатĕрлесе парса тăрас пулать. Çак задачăна тӳрремĕнех пурнăçа кĕртекенсенчен пĕрисем — хатĕрлев организацисем пулса тăраççĕ.

Ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлекен организацисем (Уполнаркомзаг, Заготскот, Маслопром тата ыттисем те), тĕпрен илсен, хăйсен ĕçне чылай лайăхлатрĕç темелле. Республика тырпул хатĕрлес ĕçе начар мар пурнăçласа пычĕ, ытти хатĕрлевсем енĕпе те çитĕнӳсем пунă.

Анчах çитменлĕхсем хатĕрлев ĕçĕнче нумай-ха. Вĕсем хальхи хĕрӳллĕ вăхăтра уйрăмăнах вăйлăн сисĕнеççĕ. Государствăна аш-какай, сĕт-çу, çăмарта тата ытти ялхуçалăх продукчĕсем парас тĕлĕшри хамăрăн обязательствăсене эпир çителĕксĕр пурнăçа кĕртсе пыратпăр. Çав вăхăтрах халĕ çăмарта, сĕт хатĕрлес тĕлĕшпе чи хĕрӳллĕн, çине тăрса ĕçлеме тăрăшмалла, мĕншĕн тесен вĕсен сезонĕ пур, вăл сезон майĕпенех иртсе пырать, çак продуктсене сезон пуçланнă вăхăтра ытларах хатĕрлемелле, сезон вĕçне хăварма тăрăшмалла мар. Тепĕр енчен тата, государство халĕ панă çăмартапа хаклăрах тӳлет.

Аш-какай хатĕрлес тĕлĕшпе чылай районсем начар мар ĕçлерĕç. Вăрнар районĕ, сăмахран, пĕрремĕш квартал планне ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пычĕ. Çапах та юлса пыракан районсем хатĕрлев ĕçне начар пурнăçа кĕртеççĕ. Канаш, Первомайски, Куславкка, Красноармейски, Çĕрпӳ районĕсем аш-какай, сĕт-çу, çăмарта хатĕрлес плансене пĕрремĕш кварталта та, иккĕмĕш кварталта та çителĕксĕр пурнăçласа пычĕç. Çак районсенчи партипе совет работникĕсем хатĕрлев ĕçĕпе куллен интересленсе ертсе пымаççĕ, ытларах хатĕрлев работникĕсем çине шанаççĕ.

Çĕрулми хатĕрлес плана тултарма пур условисем те пулнă ĕнтĕ. Иртнĕ çулта çĕрулми ăнса пулчĕ. Колхозсемпе колхозниксем хăйсене çимелĕх те, государствăна памалăх та, базара илсе тухса сутмалăх та çĕрулми туса илчĕç. Анчах ăна хатĕрлес плана чылай районсем тултараймарĕç. Мĕншĕн тесен, хатĕрлев организацисем вăл районсенче начар ĕçленĕ пулин те, парти райкомĕсемпе райсоветсен исполкомĕсем вĕсен ĕçне куллен тĕрĕслесе тăман.

Пĕр-ик тĕслĕх илсе кăтартатпăр. Первомайски районра аш-какай хатĕрлес тĕлĕшпе апрель уйăхĕнчи плана вуншар процент çеç тултарнă. Çавăн пекех сĕт хатĕрлес енĕпе те. Хатĕрленĕ сĕтĕн хисепне наркомзагăн районри конторинче ĕçлекенсен хисепĕ çине валеççен, вĕсем кашни çын пуçне кунсерен вăтам шутпа 2,2 литр сĕт хатĕрлени курăнать; çăмарта тĕлĕшĕпе çак цифра вунултта çитет. Çапла ĕнтĕ, уполнаркомзаг агенчĕсем хăйсен ĕçне сӳрĕккĕн туса пынине çак цифрăсем аван кăтартса параççĕ. Канаш районĕнче те ĕç кунтан лайăхах мар. Апла пулин те наркомзагăн Первомайски районри уполномоченнăйĕ Корчагин ата Канаш районĕнчи уполномоченнăйĕ Васильев юлташсем хăйсен агенчĕсен, хăйсен пĕтĕм аппарачĕн ĕçне вăйлатас тĕлĕшпе çителĕклĕ мерăсем йышăнмаççĕ-ха. Çавăнпа та хăшпĕр чухне ĕççĕр сĕтĕрĕнсе çӳрекен агентсене те курма пулать.

Хатĕрлев организацисен ĕçне сывăх вăхăтсенче тĕпренех лайăхлатас пулать. Вĕсен, хăйсене закон тăрăх панă правăсемпе усă курассине вăйлатнипе пĕрлех, колхозниксем хушшинчи ăнлантару ĕçне те çӳлĕ пусăма çĕклемелле.

Кунта Маслопром çинчен уйрăмăнах чарăнса тăмалла. Унăн системи сĕт йышăнма тивĕçлипе хатĕрленсе çитеймен: работниксем çитмеççĕ, тĕрлĕ ĕç хатĕрĕсем тĕлĕшпе кăлтăксем палăраççĕ. Çак çитменлĕхсемех Чăвашпотребсоюз системи ĕçĕнче те палăраççĕ.

Республикăри хатĕрлев работникĕсен хăйсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене шута илсе тивĕçлĕ выводсем тăвас пулать. Ĕçри чолхавлăха пĕтерсе, вăрçă вăхăчĕ ыйтнă пек тимлĕн те хастарлăн ĕçлеме кашни хатĕрлев работникне мобилизацилемелле. Хатĕрлев организацисен аппаратĕнче ĕçлеме хĕрарăмсене ытларах илсе, вĕсене вĕрентсе ӳстерсе пымалла. Наркомзагăн районсенчи уполномоченнăйĕсен ертсе пырас ĕçри оперативлăха ӳстермелле, хăйсен агенчĕсен ĕçне куллен тĕрĕслесе тăмалла.

Парти райкомĕсемпе райсоветсен исполкомĕсем чылай чухне хăйсене кирлĕ сводкăсемпе интересленнипех лăпланаççĕ, уполнаркомзагсен работникĕсемпе, вĕсен ĕçĕпе тĕплĕн паллашма тăрăшмаççĕ. Хатĕрлев ĕçĕсем лайăх пулса пычăр тесен, хатĕрлев организацисен ĕçне куллен тĕрĕслесе тăрас пулать, вĕсене конкретно ертсе пыни тата пулăшни кирлĕ.

Ялхуçалăх продукчĕсем халĕ çĕршыва боеприпассем пекех кирлĕ. Çакна шута илсе, хатĕрлев ĕçне эпир вăрçă ыйтнă пек туса пыма тивĕçлĕ. Çак задачăна пурнăçа кĕртме пулăшакан майсенчен пĕри вăл — ĕççыннисем хушшинче агитацилле-массăллă ĕçе вăйлатни пулса тăрать.

САД ПАХЧИСЕНЕ УПРАС ПУЛАТЬ

ИШЛЕЙ. Ишекри Сталин ячĕпе тăракан колхозăн 4 гектарлă сад пахчи иртнĕ çулсенче чылаях лайăх ешĕрме тытăннăччĕ. Садра 500 тĕп çырла йывăççи, 50 тĕп ытла улмуççи лартнăччĕ. Анчах та çак ырă пуçарăва вĕçне çитиех пурнăçлассишĕн тăрăшни кунта курăнмасть. Карта тытман пирки тата çак ĕçе тума уйрăм çын уйăрман пирки сад пахчине выльăхсем кĕрсе çĕмĕреççĕ. Çырла йывăççисем чылайĕшĕсем пĕтнĕ.

Сад пахчи колхоза пысăк тупăш пани каламасăрах паллă. Колхоз правленийĕн ăна çитĕнтерессишĕн тăрăшмалла.

Т. ВАСИЛЬЕВ.

Никам çĕнтерейми Ленин-Сталин ялавĕпе малалла, нимĕçсен захватчикĕсене аркатса тăкма!

Наркомтанкопром завочĕсемпе тĕрлĕ производство предприятийĕсен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн УСЛОВИЙĔСЕМ

Оборона Халăх Комиссарĕ Сталин юлташ лартнă задача—1942 çулта нимĕçсен фашистла войскисене пĕтĕмпех аркатса тăкас тата Совет çĕрне гитлерла мерзавецсенчен ирĕке кăларас задача—танк тăвакан промышленноçри рабочисем, инженерно-техническки работниксем тата служащисем хушшинче ĕçри çĕкленӳн çĕнĕ хумне пуçарчĕ.

Виçĕ хут орден илнĕ Кировски заводри рабочисен, инженерно-технически работникĕсен тата служащисен пин май пинлĕ коллективĕ, Сталин юлташăн майăн пĕрремĕшĕнчи приказĕ çине ответлесе, танк тăвакан промышленноçри мĕнпур рабочисене, инженерсене, техниксене, служащисене тата ытти тĕрлĕ заводсене Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăрту организацилеме тата пирĕн чаплă Хĕрлĕ Çар валли государство планĕнчен ирттерсе танксемпе дизельсем туса кăларма чĕнсе каларĕ.

Аслă Сталин ертсе пынипе пирĕн Хĕрлĕ Çар, тăван çĕре нимĕçсен фашистла захватчикĕсенчен тĕплĕн те паттăррăн тасатса, Хĕвеланăçнелле куçса пырать.

Совет танкĕсене тăвакансем, çуркунне çу вăхăтĕнче—нимĕç фашисчĕсене хирĕç пыракан çапăçусенче пирĕн танксемпе пирĕн танкистсем питех те пысăк вырăн йышăнса тăнă вăхăтра—фашистла варварсене хирĕç çĕнтерӳллĕ çапăçма Хĕрлĕ Çара хаяр та боевой машинăсем мĕн чухлĕ кирлĕ — çавăн чухлĕ туса пама хатĕр.

I.

Кировецсем Наркомтанкопром завочĕсемпе тĕрлĕ производство предприятийĕсем хушшинче Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăрту организацилеме чĕнсе каланине Наркомтанкопром завочĕсен пур коллективĕсем те хĕрӳллĕн хапăлласа кĕтсе илчĕç.

Танк тăвакан промышленноçри рабочисен, инженерно-технически работниксен тата служащисен кăмăлне хапăл туса, Профессиллĕ Союзсен Пĕтĕм Союзри Центральный Совечĕпе Танк Промышленноçĕн Халăх Комиссариачĕ социализмлă ăмăртăвăн çакăн пек условийĕсене тăваççĕ:

ТАНК ТĂВАКАН ЗАВОДСЕМ ТĂРĂХ

Хăш завод палăртнă графика кашни талăкрах пурнăçласа пырать тата государствăн уйăхри планĕнчен ирттерсе нумайрах танк туса кăларса çара ăсатать—çавă ăмăртура çĕнтерекен шутланать. Унсăр пуçне, танксем юсас, запаслă пайсене фронт валли тиесе ăсатас тĕлĕшпе панă плансене пĕтĕмĕшпех тултарни тата заводăн пĕтĕмĕшлĕ планне тултарни танк тăвакан заводсемшĕн ăмăртури обязательнăй услови пулса тăрать.

ТАНКСЕМ ВАЛЛИ ДИЗЕЛЬСЕМ ХАТĔРЛЕКЕН ЗАВОДСЕМПЕ ЦЕХСЕМ ТĂРĂХ

Хăш завод е цех палăртнă графика кашни талăкрах пурнăçласа пырса, государствăн уйăхри планĕнчен ирттерсе нумайрах дизель парать, моторсем ĕçлессин гарантиллĕ вăхăтне пĕрмаях ӳстерсе пырать тата фронта запаслă пайсем тиесе ăсатас номенклатурăра палăртнă плана тултарать—çавă ăмăртура çĕнтерекен шутланать.

БРОНЬĂЛЛĂ КОРПУССЕМ ТĂВАКАН ЗАВОДСЕМПЕ ЦЕХСЕМ ТĂРĂХ

Хăш завод е цех танксем валли государствăн уйăхри планĕнчен ирттерсе тата пахалăх енĕпе палăртнă техникăллă условисене юрăхлă броне-корпуссем парать, вĕсене талăкри çирĕплетнĕ график тăрăх тиесе ăсатса тăрать тата заводăн планне пĕтĕмĕшпе тултарать—çавă ăмăртура çĕнтерекен шутланать.

ТĔРЛĔ ПРОИЗВОДСТВĂСЕН ПРЕДПРИЯТИЙĔСЕМ ТĂРĂХ

Хăш предприяти танк тăвакан промышленность завочĕсем валли материалсем, детальсем, узелсем тата агрегатсем палăртнă график (план) тăрăх туса кăларса тата вăхăтра тиесе ăсатать, государство панă плана пĕтĕмĕшпех тултарать—çавă ăмăртура çĕнтерекен шутланать.

II.

Танк тăвакан заводсем хушшинчи социализмлă ăмăртура çĕнтерекене, çавăн пекех моторсем тăвакан заводсемпе цехсем хушшинчи социализмлă ăмăртура çĕнтерекене те Оборонăн Государственный Комитечĕн постановленийĕ тăрăх тунă Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне параççĕ.

Броньăллă корпуссем тăвакан заводсем хушшинчи социализмлă ăмăртура çĕнтерекене, çавăн пекех тĕрлĕ производствăсен завочĕсем хушшинчи социализмлă ăмăртура çĕнтерекене те ВЦСПС-па Наркомтанкопромăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне параççĕ.

Пĕтĕм союзри социализмлă ăмăртура çĕнтернĕ завода Хĕрлĕ ялав панипе пĕрлех, ĕçре палăрнă рабочисене, инженерно-технически работниксене тата служащисене премилеме, çавăн пекех ĕçлекенсен культурăпа йăла условийĕсене лайăхлатма укçан награда параççĕ.

Фронт заказĕсене пурнăçлас ĕçре малта пыракан рабочисене, инженерно-технически работниксене тата служащисене — «Наркомтанкопром социализмлă ăмăртăвĕн отличникĕ» значокпа, чи лайăх бригадăсене, участоксемпе цехсене «Наркомтанкопромăн Мухтав грамотипе» наградăлама тăратаççĕ.

III.

ВЦСПС-па Наркомтанкопром çак çулхи май уйăхĕнчен пуçласа кашни уйăхăн 5-мĕш числинчен кая юлмасăр ăмăрту итогĕсене уйăхсерен пĕтĕçтереççĕ, вĕсене «Правдăра» тата ытти хаçатсенче те пичетлесе кăлараççĕ.

Танк тăвакан промышленность завочĕсен Пĕтĕм Союзри ăмăртăвĕпе пĕрлех, заводсенчи цехсем, мастерскойсем, бригадăсем хушшинчи шалти ăмăртăва тата уйрăм рабочисем хушшинчи ăмăртăва организацилеççĕ.

Профессиллĕ Союзсен Пĕтĕм Союзри Центральный Совечĕпе Танк Промышленноçĕн Халăх Комиссариачĕ предприятисемпе цехсен руководителĕсене, танк тăвакан заводсенчи профессиллĕ тата обществăллă организацисене Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне тата ВЦСПС-па Наркомтанкопромăн Хĕрлĕ ялавне илессишĕн социализмлă ăмăртăва пуçарма хушаççĕ.

Танк тăвакан заводсенчи юлташсем—рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем тата служащисем! Майăн пĕрремĕшĕнче кăларнă лозунгсенче Ленинăн-Сталинăн Центральный Комитечĕ танк тăвакансене пурне те Хĕрлĕ Çарăн çĕнĕ çĕнтерĕвĕсене тумашкăн боевой машинăсем кăларассине пур майсемпе те вăйлатма чĕнсе каларĕ.

Профессиллĕ Союзсен Пĕтĕм Союзри Центральный Совечĕпе Танк Промышленноçĕн Халăх Комиссариачĕ Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура Наркомтанкопромпа тĕрлĕ производство завочĕсен рабочийĕсем, инженерно-технически работникĕсем тата служащийĕсем нимĕç оккупанчĕсене хăвăртрах çĕнтерме хаяр та боевой машинăсем туса кăларас ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тăвассине шанса тăраççĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Майăн 13-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Майăн 13-мĕшĕнче Керчь çурутравĕ çинче пирĕн войскăсем, противникăн вăйĕсем ытларах пулнă пирки, çĕнĕ позицисене чакнă. Нимĕçсен командованийĕ—Керчь çурутравĕ çинче çапăçусем нимĕçсем майлă вĕçленчĕç, нимĕç войскисем унта тыткăна нумай илнĕ тата танксемпе орудисем нумай тытса илнĕ, тесе пĕлтерни суя пулса тăрать. Пирĕн войскăсем йĕркеллĕн чакаççĕ тата вĕсем нимĕçсен наступлени туса пыракан войскисене питĕ пысăк çухатусем кӳреççĕ.

Харьков енче пирĕн войскăсем наступлени пуçласа янă та ăнăçлăн малалла куçса пыраççĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче нимĕнле паллă ĕçсемех те пулса иртмен.

Майăн 12-мĕшĕнче нимĕçсен 43 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 17 самолет пĕтнĕ.

Баренц тинĕсĕнче пирĕн карап противникăн 12 пин тонна водоизмещениллĕ транспортне путарнă.

* * *

Майăн 12-мĕшĕнче пирĕн авиаци часĕсем нимĕçсен 32 танкне, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 220 автомашинине, боеприпассем тиенĕ 105 лавне, 48 полевой тата зенитнăй орудине, 10 минометне, зенитнăй пулеметсен 8 точкине пĕтерсе тăкнă, чугун çул çинчи состава тата автомашинăсем тиенĕ 6 платформăна çĕмĕрнĕ, противникăн пехотине пĕр полка çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ленинград фрончĕн участокĕсенчен пĕринче пирĕн чаçсем пĕр кун хушшинче тăшманăн 20 блиндажне йышăнса илнĕ тата нимĕçсенчен 2 танк, 7 бронемашина, 4 тупă, гаубица тата уйрăмăн артиллерин пĕр батарейине, 5 автомашина, авто-кухня тата ытти тĕрлĕ çар пурлăхĕсем тытса илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсен 400 ытла вилли выртса юлнă.

* * *

Шевчукпа Перепелюк юлташсем командирсем пулса ертсе пыракан пирĕн боецсем (Çурçĕр-хĕвеланăç фрончĕ), вăйлăн çапăçса, противникăн икĕ опорнăй пунктне йышăнса илнĕ, противника техникăпа чĕрĕ вăй тĕлĕшĕнчен пысăк сиен кӳнĕ. Фронтăн тепĕр участокĕнче тăшман пулемечĕсен нумай точкисене тата 28 дзота сирпĕнтерсе янă.

* * *

Çапăçусенчен пĕринче гитлеровецсем лейтенант Гвоздев командир пулса тăракан взвода çавăрса илсе пĕтерсе тăкма темиçе хутчен те хăтланса пăхнă. Пирĕн боецсем, пилĕк хутчен штыкпа тăрса атакăна кайса, пирĕннисем çине тапăнса килекен нимĕçсене сире-сире пăрахнă. Гвоздев лейтенант боецсене хăйĕн примерĕпе хавхалантарса пынă. Вăл тăшмана винтовкăран тĕл пере-пере вĕлернĕ, алă вĕççĕн çапăçнă чухне хăй штыкпа çапăçма мастер пулнине кăтартнă. Çав çапăçура Гвоздев юлташ 20 гитлеровеца вĕлернĕ.

* * *

Лейтенант Бурдаков командир пулса ертсе пыракан боецсен групши, пăшалсемпе пулеметсенчен персе, нимĕçсен «Юнкерс—87» йышши самолетне ӳкернĕ.

* * *

Ленинград облаçĕнчи партизансем майăн 10 кунĕ хушшинче, туллимар даннăйсем тăрăх, нимĕçсен 480 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Партизансем нимĕç самолетне пĕтерсе тăкнă, противникăн войскăсемпе боеприпассем тата продовольстви турттарса пыракан тăватă эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Партизансен Б. тата К. юлташсем командир пулса ертсе пыракан пĕрлешнĕ отрячĕ майăн 4-мĕш ыран тенĕ чухне çĕрле халăх пурăнакан пункт çине, гитлеровецсем йышăнса тăракансем çине, пырса тапăннă. 10 сехет хушши пынă çапăçура нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсем 100 çынна çити пĕтнĕ. Çав отрядсен боецĕсем икĕ эшелона сирпĕнтерсе янă: пĕри, 40 вагонран тăраканскер, войскăсем турттарса пынă, тепĕри боеприпассемпе продовольстви турттарса пынă, вăл 35 вагонлă пулнă.

* * *

Нимĕçсен 331-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 557-мĕш полкăн 10-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ ефрейтор Карл Лейтнер çапла каласа панă: «Юлашки вăхăтра 10-мĕш ротăран 160 çын вилсе е аманса пĕтнĕ. Аманнисене командовани чăрмав вырăнне хурать, вĕсен пурнĕçĕшĕн тăрăшмасть. Аманнисем час-часах землянкăсенче транспорта кĕтсе темиçе кун хушши выртаççĕ, çавăнпа та аманнисенчен вилекенсем питĕ нумай. Нумай салтаксем гитлерла режим, терророа пусмăр çинче тытăнса тăракан, вăраха пырас çук тесе шутлаççĕ. Тылра саботажсем туни çинчен калакан хыпарсем тĕрлĕ майпа фронта çитеççĕ. Венăри автомобильсем тăвакан заводра çĕнĕ автомашинăсен, войскăсем турттарса çӳреме тесе тунăскерсен, пысăк ушкăнне тапамсем çунтарса янине салтаксем пĕлеççĕ. Обер-фельдфебель Лянгер нумаях пулмасть арăмĕнчен Саар облаçĕнчен çыру илнĕ, арăмĕ унта нумай шахтăсенче ютçĕр-пывсĕнчен килнĕ рабочисем механизмсене пăсса аварисем туни çинчен çырать».

* * *

Гитлерла бандитсем Сумы облаçĕнчи Голубовкăпа Аслă Березовка ялĕнче 500 киле çунтарса янă. Сынвĕлерекенсем мирлĕ пурăнакан 200 çынна асаплантарса вĕлернĕ, чĕррĕн çунтарса янă, пере-пере пăрахнă.

Майăн 14-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Майăн 14-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Керчь çурутравĕ çинче хаяр çапăçусем пынă. Фронтăн ытти участокĕсенче нимĕнле паллă ĕçсемех те пулман.

* * *

Калинин фрончĕн участокĕсенчен пĕринче противник пехотин батальонĕ, танксем пулăшса пынипе, пирĕн позицисене атакăланă. Тăшмана çывăха ярса, Кудряшов юлташ командир пулса тăракан чаçри боецсем винтовкăсемпе пулеметсенчен тата автоматсенчен харăссăн пеме тытăннă. Орудисен расчечĕсем, тӳррĕн тĕллесе персе, атака тăвакан тăшмана пĕтерсе пынă. Пирĕн боецсем контратака тума тытăнсан, гитлеровецсем, çапăçу хирне хăйсен вилнĕ тата аманнă салтакĕсемпе офицерĕсене 400 çынна çити пăрахса хăварса, каялла чакнă. Тăшманăн темиçе танкне çĕмĕрнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Çурçĕр-Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн часть икĕ кун хушшинчи çапăçусенче нимĕçсен 350 салтакĕпе офицерне, 10 орудине, 25 пулеметне, 3 автомашинине пĕтерсе тăкнă тата противникăн боеприпассем хунă складне сирпĕнтерсе янă.

* * *

Бондаренко лейтенантăн танк экипажĕ нимĕçсен танкне çĕмĕрнĕ, нимĕçсен пĕр минометне тата салтакĕсемпе офицерĕсене 50 çынна çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Çапăçу вăхăтĕнче пирĕн взводăн командирĕ аманнă пулнă. Взвода командир пулса ертсе пырас ĕçе красноармеец-автоматчик Елфишев юлташ хăй çине илнĕ. Вăл взвода виçĕ хутчен атакăна ертсе кĕнĕ. Пирĕн боецсем, Елфишев юлташ ертсе пынипе, 75 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă, 2 ручной пулемет, миномет, 13 винтовка тата темиçе пин патрон тытса илнĕ.

* * *

Красноармеец-снайпер Доценко юлташ икĕ кун хушшинче 19 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă.

* * *

Х. юлташăн партизанла отрячĕ, Смоленск облаçĕнче нимĕçсен фашистла войскисен тылĕнче кĕрешекенскер, юлашки виçĕ кун хушшинче нимĕçсен фашистла оккупанчĕсене хирĕç вăйлăн çапăçнă. Нимĕçсен пехотин икĕ батальонĕ партизансен отрядне çавăрса илсе пĕтерсе тăкма хăтланнă. Противникăн пирĕннисенчен йышлăрах вăйĕсене партизансем хăюллăн атакăланă, штыкпа тăрса çапăçасси патне çитекен хаяр атакăсенче партизансем нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 500 çынна ытла пĕтерсе тăкнă. Партизансем противникăннe çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: 17 миномет, 10 станковăй тата 6 ручной пулемет, танксене хирĕç пемелли пăшал, 247 винтовка, 12 револьвер, 20.000 патрон, 400 граната, 3 радиостанци, 54 лаша тата тумтирсемпе ытти тĕрлĕ çар пурлăхĕсем нумай.

* * *

Нимĕçсен «СС» ятлă полици дивизийĕн иккĕмĕш полкĕнчен тыткăна лекнĕ фельдфебель Франц Броер çапла каласа панă: «СС» ятлă полици дивизине кирек мĕнле пулсан та М. ялне йышăнса илме приказ панă. Пĕр уйăх хушшинче дивизи çав пункта умлăхыçлăнах нумай хутчен атакăланă, анчах ăнăçлă пулман. Çав çапăçусенче дивизин 3-мĕш полкĕ хăйĕн составĕн тăватă пайĕнчен виçĕ пайне çухатнă, иккĕмĕш полк 900 çынна яхăн çухатнă. Штрафной батальонпа Фриче групши питĕ пысăк çухатусем тӳснĕ. Çавтери пысăк çухатусем пулни салтаксене пăшăрхантарать. Малалла та çакăн пекех пулсан, Хĕвелтухăçĕнчи похода хутшăннисенчен никам та чĕрĕ тăрса юлаймасть, теççĕ салтаксем».

* * *

Майăн 7-мĕшĕнче Гамбург хулинче (Германия) «вăрçа хирĕç тата поражени тӳсесси пирки калаçнăшăн» 19 çынна вĕлернĕ. Ганновер, Шверин, Брауншвейг тата ытти хуласенче вăрçа пула тăрăхса калаçакан нумай çынсене гестапо арестлет.

* * *

Югослави партизанĕсем Итали оккупанчĕсене кунран-кун йывăр çухатусем кӳреççĕ. Çак кунсенче итальянецсен чаçĕ Босни еннелле наступлени тума хăтланнă. Партизансем фашистла захватчиксене атакăланă та каялла сирсе пăрахнă. Çав çапăçура итальянецсен 150 çын вилсе юлнă тата нумай салтакĕсем аманнă. Партизансем пулеметсемпе винтовкăсем, патронсемпе ытти тĕрлĕ çар материалĕсем тытса илнĕ. Оккупантсене хирĕç пыракан кĕрешӳре партизансен отрячĕсене халăх активлăн пулăшса тăрать.

Тăшманăн çухатусем пысăк

БРЯНСК ФРОНЧĔ, майăн 13-мĕш. (**ТАСС спецкорĕ**). Оборона Халăх Комиссарĕн Сталин юлташăн Майăн 1-мĕшĕнчи приказĕпе хавхаланнă пирĕн воинсем çапăçусенче пуçарулăха хăйсен аллинчен пĕр минутăлăха та вĕçертмеççĕ, тăшмана ĕлĕкхинчен темĕн чухлĕ хастарлăрах, вăйлăнрах çапаççĕ.

Фашистсен икĕ групши, вĕсен йышĕ 200 çын таран пулнă, юханшыв урлă васкавлăн каçса, пирĕн малти боевой позицисем çине атака тума тытăннă. Артиллерирен, минометсенчен тата пулеметсенчен вăйлăн пенипе пирĕннисем нимĕçсене хирĕç тăнă. Çапăçу хирĕнче вилнĕ вуншар çынсене пăрахса хăварса, нимĕçсем каялла чакнă. Çак çапăçусенче старши сержант Мотеев уйрăмах хăйне палăртнă.

Г. КРЫЛОВ.

Отечественнăй вăрçă фронтĕнче

Çĕрле вĕçекен бомбардировщиксемпе 800 хутчен тăшман çине тапăннă

ХĔВЕЛАНАÇ ФРОНЧĔ, майăн 8-мĕш. (ТАСС спецкорĕ). Н-ски авиачаçăн летчикĕсем, пĕр чарăнмасăрах касхи вĕçевсем туса, фашистсен çуркуннехи наступлени валли илсе килекен чаçĕсене, эшелонĕсене, боеприпассемпе продовольстви тата снаряжени склачĕсене бомбăсем пăраха-пăраха аркатаççĕ. Ĕнер çак чаçăн хăйне евĕрлĕ юбилей пулса иртрĕ: часть хăйĕн летчикĕсем çĕрлехи вăхăтсенче 800-мĕш хутчен вĕçсе тухса тăшман çине тапăннине паллă турĕ.

Авиачаçри самолетсем çак касхине те яланхи пекех çапăçу ĕçне вĕçсе тухрĕç.

Çанталăка сăнакан станци япăх çанталăк тăни çинчен пĕлтерчĕ: çĕре аялтан шăвакан пĕлĕт хупласа тăрать, инçетри курăнмасть; вăйлăн касса вĕрекен сивĕ çил. Анчах çаксем пĕри те авиачасть командирне чарса тăраймаççĕ.

Самолетсем старт çулĕ çине тухаççĕ. Юлашки самолетпа чаçăн командирĕ хăй вĕçсе тухать.

Тепĕр сехетрен мотор кĕрлени илтĕнет. Самолетсем лармалли площадкăна ракета çутатса ярать. Самолет шанчăклăн анса ларать.

Штаб авиамашининчен кĕçĕн лейтенант Барановский экипажĕн штурманĕ—сержант Четвертных тухать. Вăл хăйсене хушнă ĕçе туса тавранни çинчен пĕлтерет:

— Задание пурнăçа кĕртрĕмĕр. Бомбăсене автоколонна çине пăрахрăмăр. Шоссе çинче взрывсем пулни курăнчĕ. Каялла таврăннă чух вăрман тĕлĕнче пулеметран тата пăшалсенчен печĕç. Сиенлени çук.

Малалла Дема летчикăн штурманĕ—Кузнецов лейтенант доклад тăвать:

— Станци çине бомбăсем пăрахрăмăр. Станцие пиçĕлтертĕмĕр. Икĕ бомба эшелонсем тăнă çĕре пăрахрăмăр.

Çапла штурмансем пĕрин хыççăн тепри çитсе, противникăн транспорчĕсене, эшелонĕсене, войскăсем пухăнса тăнă вырăнсене бомба пăрахса аркатни çинчен калаççĕ. Тин çеç туса таврăннă ĕçĕсем çинчен пĕлтерсе, вĕсем каллех хăйсен машинисем патне таврăнаççĕ, — унта иккĕмĕш, виççĕмĕш хут вĕçсе кайма хатĕр тăраççĕ.

Юлашкинчен часть командирĕ Петров юлташ таврăнать. Вăл, фашистсен оборонин малти линийĕ тăрăх вĕçсе тухса, унта темиçе блиндаж, темиçе огневой точка тата противникăн чĕрĕ вăйĕсене нумай пĕтерни çинчен каласа пĕлтерет.

В. АРЕФЬЕВ.

Гитлеровецсен транспорт авиацине пĕтерни

ÇУРÇĔР-ХĔВЕЛАНАÇ ФРОНЧĔ, майăн 13-мĕш. (ТАСС спецкорĕ). Юлашки вăхăтра совет авиацийĕ çĕр çинче те, сывлăшра та пĕрмаях нимĕçсене вăйлăн çапать. Сывлăшри çапăçусем фашистсен авиацине питех те хакла ларaççĕ. Пирĕн летчиксем çапăçусенче пехотăна пысăк пулăшу параççĕ, тăшман аэродромĕсем çине бомбăсем пăрахаççĕ тата тăшманăн чĕрĕ вăйне пĕтерсе тăкаççĕ.

Темиçе кун хушшинче пирĕн летчиксем нимĕçсен 37 самолетне ÿкернĕ. Противникăн транспорт авиацине пысăк сиен тунă: систермесĕр пырса тапăннипе «Юнкерс-52» текен транспорт самолечĕсене 229 таран пĕтерсе тăкнă.

Германи аэродромĕсем çине тапăнассинче лейтенант Германăн звени уйрăмах палăрчĕ. Çапăçăва кайсан пĕринче Герман хăйĕн звенипе фашистсен 15 машинине çĕмĕрнĕ.

И. ДЕНИСОВ.

Кашни колхозра, кашни бригадăра дисциплина çирĕп пултăр!

Çĕнĕ постановленипе хавхаланса

СЕНТЕР, майăн 13-мĕш. (Телефонпа). МТС-ăн трактор бригадисенче СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ МТС трактористчĕсене тата прицепщиксене тырпул тухăçлăхне ÿстернĕшĕн ĕçшĕн хушса тÿлесси çинчен йышăннă постановление сÿтсе яврĕç. Трактористсемпе трактористкăсем, партипе правительствăн постановленийĕпе хавхаланса, ĕç тухăçлăхне ÿстерессишĕн фронтри пек ĕçлеме сăмах параççĕ.

— 1942 çулти тырпул нимĕç фашисчĕсене çапса аркатмалли вăй пулса тăнине кашни трактористпа трактористка, кашни бригадирпа унăн помощникĕ, кашни заправщикпа прицепщик ăнланса илме тивĕç, — тет МТС-ăн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне илнĕ 14-мĕш бригадăн бригадирĕ Андреев юлташ.

Партипе правительствăн постановленийĕ çине халĕ трактористсемпе трактористкăсем хăйсем çине илнĕ обязательствăсене ирттерсе тултарнипе ответлеççĕ. Перасковья Коршуновăпа Анна Шурманова трактористкăсем сменăра 4-шар гектар сухалас вырăнне 5,5-шер гектар сухалаççĕ. Иккĕмĕш бригадăри (бригадирĕ Александров) трактористкăсем: СТЗ тракторпа сменăра Ф. Огадерева — 6,72 гектар, Т. Горшкова — 7,6 гектар, Е. Чкалова — 6,1 гектар сухалаççĕ.

8-мĕш бригадăри трактористсем те кăтартуллăн ĕçлеççĕ.

Анчах та хăшпĕр бригадăсем çуракинче юлса пыраççĕ-ха. И. Сучков, З. Толикин юлташсем ертсе пыракан трактор бригадисем çуракинчи ĕç планне 11 процент çеç тултарнă. Орининно ялсоветĕнчи колхозсенче ĕçлекен трактористсем 3 тракторпа виçĕ кун хушшинче 3 гектар çеç сухаланă. 9-мĕш бригадăра икĕ трактор икĕ кун хушши ĕçсĕр ларнă. МТС механикĕсем тракторсем еплe ĕçленине сăнаса тăмаççĕ.

Г. АКИМОВ.

41 КОЛХОЗ СУХА ТУСА ПĔТЕРНĔ

КУКЕÇ, майăн 14-мĕш. (Телефонпа). Çуртырпасене майăн 13-мĕш тĕлне районĕпе пурĕ 4746 гектар акнă. Ку вăл акмалли планран 59,3 процент пулать. Районри 41 колхоз çурхи суха ĕçне туса пĕтернĕ. Апаш, Шĕнерпуç тата Карачура ялсоветĕсем тĕштырăсем акас плана ăнăçлăн вĕçлерĕç.

С. МИРОНОВ.
Райсовет исполкомĕн председателĕ.

ХАМĂРПА ĂМĂРТАКАН КОЛХОЗА ПУЛĂШАТПĂР

ШУПАШКАР РАЙОНĔ. Тĕштырăсене пирĕн колхоз 6 кун хушшинче акса пĕтерчĕ. Планпа пăхнă задание пур йышши тырăсем енĕпе те пурнăçларăмăр. Оборона фондне хывма планран ирттерсе 2 гектар сĕлĕ акса хăвартăмăр.

Кăçалхи çуракинче колхозниксемпе колхозницăсем пысăк хастарлăхпа ĕçлерĕç. Ватă колхозниксем В. Федоров, Г. Данилов, П. Михайлов суха тунă çĕрте кулленхи нормăна ытлашшипех тултарса пычĕç. Çавăн пекех Д. Иванов, И. Антонов юлташсем те — тырă акнă çĕрте, М. Платонов колхозник сÿреленĕ çĕрте пысăк тухăçлăн ĕçлерĕç.

Çуракине кĕске срокра ăнăçлăн ирттерме пирĕн лашасем вăйлă пулни питĕ те пулăшрĕ. Халĕ çĕрулми лартма вырăн хатĕрлетпĕр. Çĕрулми вăрлăхне кăçал колхоз чылай яровизацилесе лартать. Çĕрулми вăрлăхĕ çителĕклĕ, лартма хатĕрлесе хунă.

Кăçалхи çуракинче эпир кÿршĕри «Культура» колхозпа ăмăртса ĕçлетпĕр. Çак ĕçе ăнăçлăн вĕçлеме эпир вĕсене вăхăтлăха хамăр лашасене паратпăр.

Е. ПЕТРОВА.
Самуккассинчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозăн председателĕ.

Çуракинчи стахановкăсем

ИШЛЕЙ, майăн 13-мĕш. (Телефонпа). Александра Ефимова стахановка 1941 çулта 199 ĕçкунĕ тунă. Кăçал упăшкине фронта ăсатнă хыççăн Ефимова юлташ колхоз производствинче татах та ытларах пикенсе ĕçлет.

— Тылра та фронтри пек ĕçлемелле. Пирĕн ăнăçлă ĕç нимĕç фашисчĕсене пĕтерсе тăкма пулăшĕ. Вара пирĕн упăшкасем те киле таврăнĕç, — тет вăл тăшмана ылханса.

Ефимова юлташ кăçал 51 ĕçкунĕ тунă та ĕнтĕ. Халĕ икĕ касăллă плугпа суха тăвать, нормăна 180 процент тултарса ĕçлет. Ĕçшĕн хушса тÿлемелли йĕркепе ăна ĕçкунĕсене 2 хут ÿстерсе параççĕ. Çапла вăл кунсерен 5 ĕçкунĕ ытла ĕçлесе илет.

Ишекри Сталин ячĕпе тăракан колхозра Ефимова юлташ пек стахановла ĕçлекен колхозницăсем татах пур. Çапла К. Илларионова суха тунă çĕрте ĕç нормине 175 процент тултарса пырать. Елена Смирновăн упăшки фронтра. Вăл икĕ ачапа пĕччен юлнă пулсан та, çуракинче мухтама тивĕçлĕн ĕçлет. Çавăн пекех И. Смирнова, И. Митрофанова, Х. Иванова колхозницăсем те ĕç нормине тăтăшах 170—180 процент тултарса ĕçлеççĕ.

Колхоз хĕрарăмĕсене пысăк пултарулăхпа ĕçлеме май туса панă. Ачасем валли — ясли, колхозниксем валли — пĕрлешÿллĕ столовăй организациленĕ.

З. МИТРОФАНОВА.

Сталин юлташăн приказĕ çине ответлесе, единоличниксем колхоза кĕреççĕ

КУСЛАВККА, майăн 13-мĕш. (Телефонпа). Сталин юлташăн майăн 1-мĕшĕнчи приказне ăнлантарса панă хыççăн, Аслă Куснарти «16-мĕш партсъезд» колхоза единоличниксен 3 хуçалăхĕ, Çÿлти Куснарти «Красная Чувашия» колхоза пĕр хуçалăх кĕчĕç. Колхоза халĕ çеç кĕнĕ çынсем çуракинче хĕрÿллĕн ĕçлеççĕ.

И. ШАРКОВ.

Оборона фондне хывма 146 гектар акса хăвараççĕ

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. (Телефон тăрăх). Фашистла пусмăрçăсенчен ирĕке кăларнă районсенчи колхозсем валли Хĕрлĕ Чутай районĕнчи колхозсем майăн 10-мĕш тĕлне 336 центнер тырă ярса панă, ку шутра: сĕлĕ 95 центнер, тулă 23 центнер, ыраш 43 центнер тата ыттисем те. Сталин ячĕпе тăракан колхоз, «Пятилетка», «Хĕрлĕ Чутай» тата «Коминтерн» колхозсем 8—10-шар центнер тырă пачĕç.

Районри колхозсем ирĕке кăларнă районсене пулăшма тата çĕршывăн оборонине тĕреклетме планран ирттерсе ятарласа 146 гектар акса хăвараççĕ. Вăл шутран: «Великан» колхоз—5 гектар сĕлĕ тата 7 гектар тулă, «Хĕрлĕ партизан»—7 гектар сĕлĕ, «Мотор»—7 гектар пăрçа, «Трактор» — 6 гектар тулă акрĕç.

Ив. ЧИРКОВ.

Антонеску Венгрие хирĕç сăмах тухса каланă

АНКАРА, майăн 12-мĕш. (ТАСС). Антонеску «Румынин никама пăхăнмаллăх» уявĕ ячĕпе тунă çар парадĕнче çак кунсенче каланă сăмах çинчен кунта журналистсем хушшинче нумай калаçаççĕ. Антонеску румынсене «хĕвеланăçĕнчи территорисене» тавăрса пама «чаплăн» сăмах пани, пурин шухăшĕпе те, çакна пĕлтерет: Гитлер хушнă тăрăх, Антонеску ытти çĕршыв территорийĕсене туртса илмелли анлă программа кăларса тăратнă, çав программăра Трансильвани территорине каялла илесси çинчен кăна мар, Венгрин хăшпĕр ытти районĕсене те Румыни çумне хутшăнтарасси çинчен каланă.

Румынин радиостанцийĕ çавнах пĕлтерет, вăл çак кунсенче çапла каласа хунă: «эпир Трансильванине ирĕке кăларассипе çеç лăпланса тăмăпăр, çакă вăл халăхăн вăхăтра, питĕ паха задача пулса тăрать пулин те, пĕр уйрăм задача çеç пулса тăрать. Пирĕн чикĕлешенчи облаçсенче пурăнакан хамăр тăвансемпе те пĕрлешмелле», тенĕ.

Венгрие çапла уççăнах юнакан сăмаха Антонеску Гитлерăн «личнăй представителĕ» Лист генерал умĕнче каланă, çакă вăл нимĕçсем Румынин Венгрие хирĕçле позицине пĕтĕмĕшпех пулăшса тăма сăмах панă текен хыпарсем тĕрĕссине кăтартса парать. Журналистсем хушшинче тата çакна палăртаççĕ: Антонескун хăйĕн сăмахĕнче румын халăхĕ вăрçă пирки питĕ пысăк асапсем тÿссе пурăннине йышăнма тивнĕ. «Вăрçа час пĕтересси» çинчен ку хутĕнче Антонеску та пĕр сăмах та каламан, вăл халăха çĕнĕ жертвăсемпе асапсене кĕтсе илме «хатĕрленсе тăма» çеç чĕннĕ.

Финляндири выçлăх

СТОКГОЛЬМ, майăн 13-мĕш. (ТАСС). Финляндири пурнăç продовольстви тĕлĕшпе тÿсме çук йывăрланса çитни çинчен Швецие çĕнĕрен çĕнĕ хыпарсем пырса тăраççĕ. Финлянди çĕршывĕ пĕтме суннă çĕршыв пекех туйăнать.

Вилĕмле хĕрушлăхран тухас шухăшпа Финлянди правительстви апрель вĕçĕнче татах тепĕр приказ кăларнă. Ку приказ хресченсене «пĕтĕм тутлă кăшман запасĕсене хăвăртрах государствăна пама» хушать.

Нумаях пулмасть финн хаçачĕсем, темĕнле тĕлĕнмелле пысăк ĕç çинчен пĕлтернĕ пек хаваланса, «хуласенчи чухăн халăха яшка-шÿрпе çитермелле пулать» тесе çырчĕç. Анчах ку яшкана та «чи чухăнсене, чирлисене тата старикĕсемпе ачасене çеç» памалла пулать мĕн. Çакăнпа пĕрлех тата хаçатсем кунта сăмах «тутлă кăшманран пĕçерекен яшка» çинчен çеç пынине ăнлантарса параççĕ. Ача-пăчасен уйрăмах йывăр тÿсме лекет. Вĕсене тăрантарса усрама паракан норма ытла та пĕчĕккĕ. Уйрăмăнах çăкăр, сĕт тата çу тĕлĕшпе ĕç начар. Кĕрпе таврашĕ нимĕн те çук. Темиçе эрне хушшинче ачасене паракан çăкăр пайне татах та пĕчĕклетнĕ.

«Суомен сосиалидемокраатти» хаçатра çырнă тăрăх, юлашки вăхăтра, уйрăмăнах автобуссем çинче, пит те нумай инкек-синкексем пулса иртеççĕ. Выçăпа хавшанă çынсем ăнсăр пулса ÿкеççĕ.

Парижри гостиницăсенче бомбăсем çурăлни

НЬЮ-ЙОРК, майăн 13-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Парижра нимĕçсем йышăннă гостиницăсемпе ресторансенче, пурĕ 6 гостиницăпа ресторанра, бомбăсем çурăлса сирпĕннĕ. Çакăн хыççăнах бомбăсем çурăлнă çав кварталсене оккупантсен войскисем çавăрса илнĕ. Хула метрополитенĕн хăшпĕр вырăнĕсенче поездсем çÿрессине чарса лартнă.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

(Майăн 9-мĕшпе 13-мĕш хушшинчи телеграммăсене пăхса тухни)

Тĕнчери общественноçа халăхи вăхăтра тинĕс çинче пулса иртнĕ пысăк çапăçу çаплах-ха интереслентерме пăрахмасть. Ку вăрçă майăн 4-мĕшĕнчен пуçласа 9-мĕшне çитиччен Япони флочĕпе союзниксен флочĕ хушшинче Австралирен çурçĕр-хĕвелтухăç енчи Коралл тинĕсĕ çинче пулса иртнĕ. Çавăнти çапăçура мĕнле çухатусем пулни çинчен Япони те, союзниксем те официальнăй йĕркепе пĕлтерменни пирки, вăл çапăçура кам мĕнле çĕнтерÿ тунине пĕтĕмĕшпех хаклама çук-ха. Çавах та ку çапăçусене пысăк вырăна хураççĕ. Паллах, Коралл тинĕсĕ çинчи çапăçу вăл — Японин Австрали çине тапăнма тахçантанпах хатĕрленнĕ хăйĕн ĕçĕсене малалла сарса яма шутланине пула тухнă çапăçу пулса тăрать, анчах та ку çапăçура союзниксен флочĕпе авиацийĕ Японин вăйĕсене хирĕç вирлĕн тăрса кĕрешнĕ.

Австралирен çурçĕр-хĕвелтухăç енчи утравсен районĕнче çаплах-ха сывлăшри çапăçусем пыраççĕ. Майăн 11-мĕшĕнче союзниксен авиацийĕ Японин Соломон утравĕсен районĕнче çÿрекен пароходчĕсене атакăланă. Икĕ транспорта аркатнине палăртнă. Иуизиада архипелагĕнче (Çĕнĕ Гвинейăран кăнтăр-хĕвелтухăç енче) союзниксен бомбардировщикĕсем Японин гидросамолечĕсем тăракан база çине пырса тапăннă. Бомбăсем пăрахнипе японецсен пĕр пысăк танкерне, тăватă моторлă пысăк гидросамолетне тата тинĕс çыранĕнчи çурт-йĕрсене аркатса тăкнă.

Япони авиацийĕ союзниксен Морсбири (Çĕнĕ Гвинея утравĕн кăнтăр енчи çыранĕ) тата Хорн утравĕ çинчи (Çĕнĕ Гвинейăпа Австрали хушшинче) аэродромĕсене атакăланă. Авиаци тапăннинчен пысăк сиенсемех пулман.

Бирмăри вăйлă çапăçусем Китай чиккинче, çавăн пекех тата Мандалай хули районĕпе Финдвин юханшывĕн айлăмĕнче пыраççĕ. Японин Лашиона илнĕ хыççăн хăвăрт малалла кайнă войскисем асăннă вырăнсенче вăйлăн хирĕç тăракан китаецсем çине пырса перĕннĕ. Японин çарĕсем малалла куçса пынине чарса лартнă. Иртнĕ эрнере йышăнса илнĕ Бандин хулинчен японецсен татах тухса кайма леннĕ. Лункин хули районĕнче те çапăçусем пыраççĕ. Ку районра китаецсем, контрнаступлени туса, японецсен салтакĕсемпе офицерĕсене — виçĕ пин çынна ытла çавăрса илнĕ те вĕсене йăлтах пĕтерсе тăкнă.

Чефанран çурçĕр-хĕвелтухăç енче пулса иртнĕ çапăçусенче японецсем, вилнисене шутласан кăна та, пин çын ытла çухатнă.

Мандалай хули районĕнче Китай войскисем японецсен тылĕнче партизанла майсемпе кĕрешеççĕ. Хуларан çурçĕр енчи районсенче çапăçусем пыраççĕ. Чиндзин юханшывĕ улăхĕнче Англи çарĕсем çурçĕрелле чакаççĕ.

Филиппинра ĕçсем мĕнле тăни çинчен хыпар çук.

Инçетри хĕвелтухăç шывĕсем çинче Америкăн подводнăй лодкисем Японин пĕр эсминецне тата икĕ грузовой пароходне путарнă. (ТАСС).

Голланди халăхĕн гитлеровецсене хирĕçле выступленийĕсем

ЖЕНЕВА, майăн 13-мĕш. (ТАСС). Кунта çитнĕ хыпарсем çакна пĕлтереççĕ: Германи войскисем Голландие çĕмĕрсе кĕни икĕ çул тултарнă майпа юлашки кунсенче пĕтĕм Голландире нимĕç оккупанчĕсене хирĕçле выступленисем пулса иртнĕ. Майăн 10-мĕшĕнче Амстердамра, Гаагăра, Роттердамра тата ытти хуласенче те нумай çуртсем çине Голланди халăхĕ хăй ирĕкĕпе пурăнассишĕн кĕрешнине кăтартса национальнăй ялавсем кăларса çакнă. Майăн 10-мĕш ыран тенĕ чух касхине Гаагăра нимĕçсен çар комендатурин çурчĕ çинчи фашистсен свастикăллă ялавне çурса антарнă. Çакăн пирки хулара нумай çынна тытса хупнă. Гаага хулине Лей пырса çитнĕ кун хула электростанцинче взрыв пулнă, çакна пула касхине хулан нумай кварталĕсем тĕттĕмре ларнă. Майăн 11-мĕшĕнче Гронинген хулинчи пĕр çар заводĕнче пушар тухнă. Темиçе цех тĕппипех çунса кайнă. Çав кунах Амстердам сывăхĕнче пĕр çар склачĕ взрыв пулса сирпĕннĕ.

Голланди халăхĕн массăллă выступленийĕсем пуласснчен шикленнипе, нимĕçсен влаçĕсем туса ирттерме шутланă çĕрлехи демонстрацисене пур çĕрте те чарса лартмалла тунă. Халĕ Голландире çынсене массăллăн арестлеççĕ.

БОЛГАРИ ПАТРИОЧĔСЕМ ÇĔКЛЕНЕÇÇĔ

ЛОНДОН, майăн 13-мĕш. (ТАСС). Стамбулран илнĕ хыпарсем çакна пĕлтереççĕ: Болгари халăхĕ хушшинче Германие хирĕçле движени ÿссех пырать. Германие хирĕç тăвакан саботажсем нумайланаççĕ. Çак кунсенче çеçха Харманлире поездсем хире-хирĕç пырса çапăннипе виçĕ вагон çĕмĕрĕлнĕ. Поликрайще станцинче икĕ товарнăй поезд хире-хирĕç пырса çапăннă. Орехово станци сывăхĕнче болгар патриочĕсем чуллă сăрта сирпĕнтерсе чугунçулне пăснă. Çакна пула чугунçул тăрăх поездсем çÿресси темиçе куна чарăнса тăнă. Германи заказĕсене тăвакан Никоичев фабрикинче пушар тухнă, пушарпа полуфабрикатсем хунă склад çунса кайнă. Саботажла ĕçсем çавăн пекех Болгари çарĕнче те нумайланса пыни çинчен пĕлтереççĕ. Ун пек ĕçсем уйрăмăнах авиаци чаçĕсенче палăраççĕ. Кунта час-часах самолетсен моторĕсене пăсаççĕ е самолетсене юрăхсăра кăлараççĕ.

Эвакуациленĕ рабочисемпе служащисен ĕç стажне сыхласа хăварасси çинчен

Профсоюзсен Пĕтĕм Союзри Центральный Совечĕ çапла ăнлантарса парать: ĕççыннн депутачĕсен Совечĕсен исполкомĕсем йышăннă тăрăх, тĕрлĕ тата ватă пулнă пирки эвакуациленĕ рабочисемпе служащисен, кунсăр пуçне тата йывăр çын пулнă е пĕчĕк ачасем пур пирки эвакуациленĕ хĕрарăмсен, ĕçрен уйăрăлса кайса тепĕр хут ĕçлеме тытăнас вăхăт виçĕ уйăх иртмен пулсан, ĕçрен пĕртте татăлман стаж сыхланса юлать. Кунта çĕнĕ вырăна пурăнма куçнă чухне иртнĕ вăхăт, хĕрарăмсен, кунсăр пуçне, йывăр çын пулнă пирки тата ача суратма илнĕ отпуск вăхăчĕ шута кĕмест.

ВЦСПС-ăн çак кăтартăвне СССР Совнаркомĕ çирĕплетнĕ. (ТАСС).

Отечественнăй вăрçă участникĕсем валли санатори уçнă

Отечественнăй вăрçăра аманнă боецсемпе командирсем валли Мускав сывăхĕнче санатори уçнă. Санатори хыр вăрманĕнче. Сиплессине тата канассине тĕрĕс организацилеме çав ĕçсене лайăх пĕлекен врачсене чĕннĕ.

Санаторинче общеобразовани курсĕ уçнă, тĕрлĕ профессисемпе ĕçлеме вĕрентмешкĕн мастерскойсем уçăлаççĕ, библиотека пур. Унта — хирурги кабинечĕ, физически меслетпе сиплемелли, шăлсене сиплемелли кабинетсем пур. (ТАСС).

Çĕркăмрăкĕн çĕнĕ шахтисем ĕçе кĕреççĕ

Чкаловск тата Актюбинск облаçĕсенче çĕркăмрăкĕ кăларас ĕç вăйланать. Домбаровск, Соль-Илецк, Актюбинск, Берчогур таврашĕнчи çĕркăмрăкне кăларма тăрăн мар шахтăсем чылай тăваççĕ, вĕсене тума укса-тенкĕ нумаях кирлĕ мар тата вĕсене тусан кĕске срокрах кăмрăк кăларса усă илме май килет. Чылай шахтăсем ĕçе кĕнĕ те ĕнтĕ. (ТАСС).

Пăрасем туса хатĕрлемелли çĕнĕ метод

Горький хулинчи автозаводра пĕчĕк пăрасем туса хатĕрлессинче çĕнĕ методпа усă курма пуçланă. Çав метода инженер Богдатьев шухăшласа кăларнă. Ĕлĕк пăрасене фрезернăй станок çинче тунă, халĕ туптаса тата шăратса тăваççĕ. Çакă вара пăрасене вунă хут хăвăртрах тума, завода çулталăкра 200 пин тенкĕ ытла укса перекетлеме май парать. (ТАСС).

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ШУПАШКАРТИ ЭРЕХ ЗАВОДНЕ
катка-пичке тума тата киввисене юсама пĕлекенсем
ВАСКАВЛĂН КИРЛĔ
Ĕçукçи—каласса таталнă тăрăх.
Хватер—общежитире.
Столовăйра апат çитереççĕ.
Тĕплĕнтерех çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар хули, Чувашская урам, 61, эрех завочĕ, заводри главнăй инженер.

Чебоксарская
ЮРИДИЧЕСКАЯ КОНСУЛЬТАЦИЯ
оказывает бесплатную юридическую помощь военно-служащим и их семьям по всем правовым вопросам, дает устные советы и составляет деловые бумаги ежедневно: в рабочие дни с 9 до 17 час. 30 мин., в выходные дни с 8 час. до 17 час.
Адрес: гор. Чебоксары, Красная площадь, Наркомюст.
2—1.

Наркомлесу Чувашской АССР
СРОЧНО ТРЕБУЮТСЯ
Для работы в аппарате Наркомлеса:
старший инженер по мехтранспорту, начальник ПСО, шофера для легковых автомашин ЗИС-101, ГАЗ-А, главный бухгалтер, начальник финотдела, инженер-технолог.
Для работы в леспромхозах и мехлесопунктах:
инженер или опытный техник-строитель, начальники и техноруки лесопунктов, инженеры и техники по лесозаготовкам, главные и старшие бухгалтера.
Желающих предложить свои услуги просим с заявлениями обращаться по адресу, гор. Чебоксары, ул. Урицкого, 36, Наркомлес Чувашской АССР, или же по телефону № 3—36 в Отдел кадров.

СРОЧНО ТРЕБУЮТСЯ
бухгалтер-ревизор, шофер, конюх-возчик.
Обращаться по адресу: г. Чебоксары, ул. Кадыкова, д. 7, Казанская М/О база Главснабторга.

Коммунист ертсе пыракан колхозра

СЕНТЕР. Юнга ялсоветĕнчи «Çĕнĕ Юнга» колхоз районра малта пыракан колхозсенчен пĕри. Ку колхоз вăйлă тырпул туса илес, çавăн пекех выльăх-чĕрлĕхсен йышне ÿстерес, вĕсен продуктивноçне хăпартас тĕлĕшпе те пысăк çитĕнÿсем турĕ. Çаксене вара, пуринчен ытла, кунти пуçламĕш парторганизаци колхоза кулленхи ĕçре пулăшса, тĕрĕс ертсе пынипе тата колхозри коммунистсем хăйсен ĕçри паха примерĕсемпе ытти колхозниксене хавхалантарса пынипе тума пултарнă.

Пуçламĕш парторганизацинче тăватă коммунист кăна пулсан та, вĕсем колхозра пысăк вăй пулса тăраççĕ, пурте ответлă ĕçсене туса пыраççĕ. ВКП(б) членĕ Салдакеев юлташ темиçе çул хушши колхоз председателĕ пулса ĕçлет, колхоза юратать, ăна тĕреклетессишĕн, малти вырăна кăларассишĕн пĕтĕм вăя хурать. Çавăнпа та колхозниксем те ăна хисеплеççĕ, пур ĕçсене те вăхăтра тăваççĕ.

Вăрçăн малтанхи кунĕсенчех вĕсен колхозĕнчен икĕ бригадир тата чылай колхозниксем фронта тухса кайнă. Фронта кайнă бригадирсем вырăнне хĕрарăмсем—Т. Ванюшкинăпа Е. Виноградова юлташсем йышăннă. Вĕсем иккĕшĕ те ВКП(б) членĕсем, хăйсен бригадисене начар мар ертсе пыраççĕ. Виноградова ертсе пыракан бригада колхозра чи малта пыракан бригада шутланать. ВКП(б) членĕ Ванюшкина юлташ ертсе пыракан бригада та çуракинче начар мар ĕçлет.

«Çĕнĕ Юнга» колхоз обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе 1941 çулти плана ирттерсе тултарнă: ĕне ферминче выльăхсен йышĕ 121 проц., сысна ферминче—113 процент, сурăх ферминче—111 процента çитнĕ. Фермăсенче ĕçлекенсем пурте пекех хĕрарăмсем, вĕсем çак ĕçре 8—9 çул пĕр улшăнмасăр ĕçлеççĕ. Сăмахран, Фекла Вазикова сысна ферминче 9 çул ĕçлет. Вăл хăй фермăра ĕçлеме пуçланăранпа колхоза çĕршер сысна çитĕнтерсе панă. Иртнĕ çулта кăна Вазикова планран ирттерсе 43 сысна ÿстернĕ. Кашни амаран вăл вăтам шутпа 19 çăвăр илсе пăхса ÿстернĕ. Çавăншăн ăна колхоз ĕçшĕн хушса тÿлес йĕркепе 12 сысна çури панă.

Ытти фермăсем те колхоза сахал мар продукци параççĕ. Иртнĕ çулта кашни ĕнерен вăтам шутпа 1060 литр сĕт илме палăртнă пулсан, вĕсем 1216 литр суса илнĕ. Ĕне сунă çĕрте 4 çул хушши комсомолка Ульяна Каптурина ĕçлет. Иртнĕ çул планран ытлашши сĕт суса илнĕшĕн колхозран 100 литра яхăн сĕт илнĕ.

Отечественнăй вăрçă пуçланнăранпа «Çĕнĕ Юнга» колхоз членĕсем оборона фондне вуншар центнер тырă, пин литра яхăн сĕт, аш-какай т. ыт. те панă. Ăшă тумтирсем валли 44 тир тата 20 килограмм çăм панă. Халĕ колхоз оборона фончĕ валли 3 сысна çури, 2 путек тата 1 пăру çитерсе самăртать.

«Çĕнĕ Юнга» колхоз членĕсем ку таранччен тунă çитĕнÿсемпе лăпланса лармаççĕ. Тăшмана пуçĕпех çапса аркатас тесен, вăйсене темиçе хут ÿстерсе ĕçлемеллине вĕсем лайăх ăнланаççĕ. Çураки—фронтпа пĕрех. Çавăнпа та кунти колхозниксем çуракине ăнăçлăн ирттерессишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлеççĕ.

А. СОЛОВЬЕВ.

ГОРЬКОВСКИЙ ФИЛИАЛ
ВСЕСОЮЗНЫХ ЗАОЧНЫХ УЧЕТНЫХ КУРСОВ (ВЗУК) НАРКОМЗЕМА СССР
производит набор заочников на следующие отделения:

Наименование отделений	Срок обучения	Учебная плата
Отделение счетоводов по простой системе колхозного учета	2 мес.	61 руб.
Отделение счетоводов по двойной системе колхозного учета	3 мес.	135 руб.
Отделение ревизионных комиссий колхозов	2 мес.	50 руб.
Отделение инструкторов-бухгалтеров райзо	2 и 4 мес.	170 руб.

Курсы обеспечивают заочников всеми учебниками, методическими указаниями и консультацией.
Зачисление производится по получении учебной платы и анкеты.
Анкеты можно получить у инспектора-бухгалтера райзо.
Адрес для перевода денег: гор. Горький, Горьковская областная контора Госбанка, расчетный счет 75/716, ВЗУК.
Адрес для писем: гор. Горький, Кремль, Облзо, комната № 10, ВЗУК.
ГОРЬКОВСКИЙ ФИЛИАЛ ВЗУК.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 785 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 260. Ф. 6. 58 64 п. л.